Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнченпе тухать

67 (8028) № ✻ Шӑмат кун, 2012 ҫулхи авӑн (сентябрь) уйӑхӗн 1-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

Паян – Пӗлӳ кунӗ

## Ачасем парта хушшине ларчӗҫ

Паян пирӗн районта пурӗ 3543 ача парта хушшине ларчӗ, вӗсенчен 349-шӗ – пӗрремӗш класа каякансем.

Пӗрремӗш шӑнкӑрав янӑранӑ хыҫҫӑн пурте ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗнчи пӗрремӗш урока васкарӗҫ. Кӑҫалхи урок теми – «Олимп тата паралимп юхӑмӗн хаклӑлӑхӗ». Ку урока ирттерме учительсем август уйӑхӗнче методика тӗлӗшӗнчен электронлӑ майпа пулӑшу илнӗ пулнӑ.

Шкул библиотекисем ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ умӗн татах пуянланчӗҫ. Кашни библиотекӑрах ачасене ҫӗнӗ кӗнекесем кӗтеҫҫӗ. Июль тата август уйӑхӗсенче федераллӑ бюджетран районти шкул библиотекисене вӗренӳ кӗнекисем пурӗ 9119 комплект килнӗ. Ку вӑл 2 миллион та 153 пин те 550 тенкӗлӗх. Комплектсенчен ытларахӑшӗ – 8560 – пуҫламӑш сыпӑкра вӗренекенсем валли. Кӗнекесем килсе тӑрасси малалла пырать.

Ачасене шкула кунсерен шкул автобусӗсем турттараҫҫӗ. Вӗсем ҫак ӗҫе пурнӑҫлама хатӗррине те тӗрӗсленӗ. Кашни автобус ГЛОНАСС тытӑмӗпе ҫыхӑннӑ.

Район администрацийӗн вӗренӳ пайӗнчен пӗлтернӗ тӑрӑх сентябрӗн 3-мӗшӗнче терроризма хирӗҫ кӗрешессипе ҫыхӑннӑ мероприятисем те иртмелле. Акӑ август 29-мӗшӗнче Чуманкассинчи вӑтам шкул территорийӗнче ГО тата ЧС службин подразделенийӗсен вӗрентӗвӗ иртрӗ. Ятарлӑ службӑсем – пурӗ 58 сотрудник – тачӑ ҫыхӑнура ӗҫлесе кӗске хушӑрах шкулти «терроризмла хӑрушлӑха» сирнӗ. Вӗренӳ ҫулӗ пуҫлансан вара шкул ачисемпе вӗрентекенсем те ҫакӑн евӗр вӗренӳ ӗҫне хутшӑнӗҫ. Сӑмах май каласа хӑвармалла, районти вӗренӳ учрежденийӗсенче пуринче те полицие чӗнмелли ятарлӑ кнопкӑсем вырнаҫтарнӑ. Хальхи вӑхӑтра видеокамерӑсем вырнаҫтарас ӗҫ пырать. Хӑш-пӗр шкулсенче тата шкулчченхи сакӑр вӗренӳ учрежденийӗнче вӗсем ӗҫлеҫҫӗ ӗнтӗ.



Н. НИКОЛАЕВА.

**Чӑваш Республикин хисеплӗ ҫыннисем!**

**Сире Пӗлӳ кунӗпе тата ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ ятпа чун-чӗререн саламлатӑп!**

Сентябрӗн 1-мӗшӗнче республикӑри пур вӗренӳ учрежденийӗн алӑкӗсем уҫӑлаҫҫӗ, шкул ачисем, ПТУ-сенче вӗренекенсем, аслӑ шкул студенчӗсем пӗлӳ ҫулӗ ҫине тухаҫҫӗ.

Ҫак ҫул шкул партипе е студентсен аудиторийӗпе чикӗленмест. Ваттисем ахальтен мар: «Ӗмӗр пурӑн – ӗмӗр вӗрен», – тесе каланӑ. Пахалӑхлӑ вӗренӳ, профессиллӗ тӗрлӗ енлӗ хатӗрленӳ, пӗрмаях ҫӗнӗ информаци илсе тӑрас тата квалификацие ӳстерес туртӑм кашни ҫыннӑн анӑҫу тумалли тӗп услови пулса тӑрать.

13 пин ытла пирӗн пӗчӗк граждансем шкул алӑкне пӗрремӗш хут уҫӗҫ. Паллӑ ӗнтӗ, чылай ачашӑн пӗлӳ ҫулӗ ача садӗнчен пуҫланать. Ҫавӑнпа та шкулчченхи вӗренӳ пуриншӗн те меллӗ пултӑр тесе тӑрӑшасси Чӑваш Ен патшалӑх политикин приоритетлӑ енӗ пулса тӑрать.Ҫак ыйтӑва татса пама Правительство комплекслӑ мерӑсем йышӑнчӗ, ҫапла вара 2014 ҫул вӗҫне республикӑри районсемпе хуласенче 24 ҫӗнӗ ача сачӗ, реконструкци ӗҫӗсене шута илсен пурӗ 48 ача сачӗ уҫӑлмалла. Ҫапла майпа эпир шкулчченхи вӗренӳ учрежденийӗсенчи черет ыйтӑвне тӗппипех татса парӑпӑр.

Ҫитӗнекен ӑру пӗлӗве пысӑк квалификациллӗ педагогсем ертсе пынипе хальхи вӑхӑтра тан пыракан шкулсенче, хӑтлӑ классенче илтӗр тесе мӗн май пур таран тӑватпӑр. 2012 ҫулта Чӑваш Енри пӗтӗмӗшле вӗренӳ тытӑмне модернизацилемелли программӑна пурнӑҫлама 1 миллиард ытла тенкӗ уйӑрнӑ. Ҫак программӑпа килӗшӳллӗн республикӑри кашни виҫҫӗмӗш шкула юсаса ҫӗнетмелле. Ку вара пирӗн ачасене тата пахалӑхлӑрах вӗрентӳпе тивӗҫтерме май парӗ.

Вӗренекенсен пултарулӑхне тупса палӑртасси тата ӑна аталантарасси, стандартлӑ мар шухӑшлакан, ӗҫлекен педагогсене хавхалантарасси те паян патшалӑх политикин вӗренӳ сферинчи пӗлтерӗшлӗ енӗ. Вӗренӳре тата хушма пӗлӳ илессинче палӑрӑмлӑ результатсем тума пултарнӑ шкул ачисемпе студентсем ҫулсеренех Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗн стипендине тивӗҫеҫҫӗ, хастар учительсем грантсем ҫӗнсе илеҫҫӗ.

Хаклӑ юлташсем! Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ сирӗн валли нумай савӑнӑҫлӑ самант илсе килессе шанатӑп, йывӑрлӑхсене вара пирӗн пӗрлехи ӗҫ ҫӗнтерме пулӑшӗ. Ҫирӗп сывлӑх, ҫӗнӗ ӳсӗмсем сунатӑп, пӗлӳ илес туйӑм сирӗнте ан иксӗлтӗр.

**Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ М. ИГНАТЬЕВ.**

**Хисеплӗ педагогсем, шкул ачисем тата вӗсен ашшӗ-амӑшӗсем!**

Сире Пӗлӳ кунӗ ячӗпе ӑшшӑн саламлатӑп. Шкул шӑнкӑравӗ ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнине палӑртса кӑҫал 3543 ачана парта хушшине ӑс пухма чӗнӗ. 349 ача вара пӗрремӗш хут шкула каять, вӗсене илӗртӳллӗ те асамлӑ пӗлӳ тӗнчи, ҫӗнӗ туссем, пысӑк ҫитӗнӳсем кӗтеҫҫӗ.

Педагогсен профессийӗ – чи пархатарлисенчен пӗри. Эсир ачасене тӗрлӗ енлӗ ӑс паратӑр, вӗсенче талант курса ӑна аталанма пулӑшатӑр. Ҫакна пирӗн пултаруллӑ та хастар учительсем ачасене тӗрлӗ конкурссене хатӗрлесе ҫӗнтерӳпе таврӑнни те ҫирӗплетет.

Учитель ӗҫӗнче чи кирли – ачасене юратни. Малашне те эсир вӑхӑтпа тан пыма тӑрӑшасса, ҫамрӑк ӑрава тӗрлӗ ҫитӗнӳсем тума хавхалантарса пулӑшасса шанса тӑратӑп. Сирӗн чӗресенче ырӑ ҫулӑм нихӑҫан та ан сӳнтӗр!

Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ ятпа саламласа педагогсене пысӑк ҫитӗнӳсем тума, ӗмӗтленнӗ ӗмӗтсене ҫитерсе пыма ҫирӗп сывлӑх, телей, малашне те аталану ҫулӗпе ҫирӗппӗн утма хавхалану, ачасене лайӑх паллӑсемпе вӗренме, конкурссемпе олимпиадӑсенче, ӑмӑртусенче мала тухма ӑнӑҫу сунатӑп.

**Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р. ТИМОФЕЕВ.**

Ыйхрав

## Райхаҫат парнисемшӗн старта чӗнетпӗр

**Сентябрӗн 8-мӗшӗнче «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» район хаҫачӗн парнисене ҫӗнсе илессишӗн ҫӑмӑл атлетикӑпа ӑмӑртусем иртеҫҫӗ. Эстафетӑра вӑй виҫмелле.**

**Сӑмах май палӑртса хӑварар. Райхаҫат парнисене тивӗҫессишӗн районти спортсменсем 40 ҫула яхӑн старта тухаҫҫӗ. Ҫавӑнпа кӑҫал та редакци ҫак ӑмӑртусене ирттерме палӑртрӗ.**

Ӑмӑрту положенийӗпе 5-мӗш страницӑра паллашӑр.

Октябрӗн 14-мӗшӗнче – суйлав

## Виҫӗ кандидата регистрациленӗ

Райхаҫатӑн иртнӗ шӑмат кунхи номерӗнче Муркаш, Чуманкасси, Йӳҫкасси ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсене суйлама кандидатсем тӑратни ҫинчен пӗлтернӗччӗ.

Муркаш территори суйлав комиссийӗ 2012 ҫулхи августӑн 28-мӗшӗнче кандидатсене регистрацилесси ҫинчен решенисем йышӑннӑ.

Муркаш территори суйлав комиссийӗ 64/1 № решенипе **Муркаш ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхне суйлама Сергей Николаевич ЕРМОЛАЕВА регистрациленӗ**. Вӑл 1976 ҫулта ҫуралнӑ. Муркаш ялӗнче пурӑнать. Муркаш ял тӑрӑхӗн администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ, хальхи вӑхӑтра администраци пуҫлӑхӗн тивӗҫӗсене пурнӑҫлать. «Единая Россия» партин районти уйрӑмӗ кандидата тӑратнӑ.

Муркаш территори суйлав комиссийӗ 64/2 № решенипе **Чуманкасси ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхне суйлама Николай Валерианович БЕЛОВА регистрациленӗ**. Вӑл 1967 ҫулта ҫуралнӑ. Исетеркккӗ ялӗнче пурӑнать. Хальхи вӑхӑтра Чкалов ячӗпе хисепленекен хуҫалӑхӑн тӗп инженерӗнче ӗҫлет. «Единая Россия» партин районти уйрӑмӗ кандидата тӑратнӑ.

Муркаш территори суйлав комиссийӗ 64/3 № решенипе **Йӳҫкасси ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхне суйлама Анатолий Николаевич КУЗЬМИНА регистрациленӗ**. Вӑл 1964 ҫулта ҫуралнӑ. Йӳҫкасси ялӗнче пурӑнать. Вӑхӑтлӑха ӗҫлемест. «Единая Россия» партин районти уйрӑмӗ кандидата тӑратнӑ.

Кандидатсене регистрацилени ҫинчен ятарлӑ удостоверенисем пама йышӑннӑ.

Республикӑра

## Ҫӗршӗн явап тытма вӑхӑт

Августӑн 29-мӗшӗнче ЧР Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев республика пуҫлӑхӗ ҫумӗнчи коррупципе кӗрешекен координаци канашӗн черетлӗ ларӑвне ирттернӗ. Тӗп ыйту патшалӑх, муниципаллӑ пурлӑхпа усӑ курнӑ чухне право йӗркине пӑснине тупса палӑртасси пирки пулнӑ.

– Пирӗн коррупципе кӗрешме нормативлӑ база та, ку енӗпе результатсем те пур. Пирӗн республикӑна коррупципе ӑнӑҫлӑ кӗрешекен регионсен шутне кӗртеҫҫӗ. Апла пулин те эпир ҫине тӑни пур чухне те тивӗҫлӗ результат памасть, – тенӗ республика пуҫлӑхӗ.

Патшалӑх, муниципаллӑ пурлӑхпа тата ҫӗрпе усӑ курни, уйрӑмах хула ҫывӑхӗнчи территорисенче, тӗрлӗ ултавҫӑсене илӗртет. Ку енӗпе саккунсене кӑна мар, вӗсемпе усӑ курассине те ҫӗнетсе пымалла, палӑртнӑ вӑл.

– Ҫак ултавлӑ ӗҫсенче, тӗпрен илсен, ялан пӗр ҫынсем курӑнаҫҫӗ. Вӗсем тӑтӑш ответлӑхран тараҫҫӗ. Ҫавӑнпа та пирӗн вӑхӑт ыйтнине шута илсе, ултавҫӑсен ҫулне пӳлме хамӑр ӗҫе корректировка тумалла, – палӑртнӑ Михаил Игнатьев.

ЧР Пурлӑх тата ҫӗр хутшӑнӑвӗсен министрӗ Светлана Енилина юлашки ҫулталӑк ҫурӑра республикӑра патшалӑх харпӑрлӑхӗ шутланакан объектсене тытса тӑракан 254 организацие тӗрӗслениие каланӑ.

(Вӗҫӗ 3 стр.).

Халӑхпа сӳтсе явнӑ

## Район уставне улшӑну кӗртесси пирки

Хальхи вӑхӑтра депутатсен районти Пухӑвӗнче 25 депутат. Вӗсене 5 ҫуллӑха халӑхпа тӳрремӗн сасӑласа пӗрер мандатлӑ округсем тӑрӑх суйланӑ. Муркаш районӗн Уставӗн 23 статйине улшӑну кӗртсе районӑн аслӑ органӗнче 19 депутат хӑварма палӑртнӑ. Депутатсен районти Пухӑвӗ кун пирки 2012 ҫулхи июлӗн 27-мӗшӗнче С-20/4 № йышӑну тунӑ.

Августӑн 28-мӗшӗнче депутатсен районти Пухӑвӗн «Чӑваш Республикин Муркаш районӗн Уставне улшӑну кӗртесси ҫинчен» йышӑну проектне халӑхпа сӳтсе явнӑ, ырланӑ.

Саламлатпӑр

Куҫкин ялӗнче пурӑнакан ЧР тава тивӗҫлӗ учительне, педагогика ӗҫӗн ветеранне **Иван Ильич КАБУРКИНА** 75 ҫул тултарнӑ ятпа чи ӑшӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр.

Мӗн ӗмӗр тӑрӑшсах эсир ачасене воспитани парас ӗҫре вӑй хутӑр. Нумай ҫул хушши шкул ертӳҫинче ӗҫлесе учительсен, ашшӗ-амӑшӗсен, ачасен хисепне тивӗҫрӗр. Эпир халӗ те Сире ырӑ сунса Сирӗнпе мухтанатпӑр. Сывлӑхӑр сирӗн пӗрре те ан хавшатӑр, инкек-синкекӗ пӑрӑнса ҫӳретӗр. Кун-ҫулӑр вӑрӑм та телейлӗ пултӑр. Эсир пурри – пирӗншӗн телей.

**Салампа: Ильинка шкул коллективӗ, кунтан вӗренсе тухнисемпе шкул ачисем.**



Шерӗк ялӗнче пурӑнакан **Александр Николаевич КОШКИНА** 60 ҫул тултарнӑ ятпа пӗтӗм чун-чӗререн саламлатпӑр. Ҫирӗп сывлӑх, иксӗлми телей, вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр.

**Салампа: мӑшӑрӗ, ывӑлӗ, хӗрӗпе кӗрӳшӗ, мӑнукӗсем, ҫывӑх тӑванӗсем, пускилсем.**

# Ача малтанах çемьере телейлĕ пултăр

**Муркашри ача-пăча библиотекинче «Надежда» консультаципе методика центрĕ уçăлни икĕ эрне кăна иртрĕ. Апла пулин те ытлари кун унта пĕрремĕш пысăк мероприяти иртрĕ. Вăл хăйĕн анлăшĕпе кăна мар, пĕлтерĕшĕпе тата уссипе те палăрчĕ.**

**«Кам çемьере телейлĕ, çав телейлĕ» вĕренӳ семинарĕ районти нумай ачаллă ашшĕ-амăшне, йывăр лару-тăруллă çемьесене тата ачасене пухрĕ. Семинара пысăк опытлă педагогсем, психологсем, çул çитменнисене тата вĕсен прависене хӳтĕлекен район администрацийĕ çумĕнчи комисси членĕсем хутшăнчĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеевпа республикăн патшалăх тĕп инженер инспекторĕ В. Димитриев та çавра сĕтел хушшинче ашшĕ-амăшĕсемпе тата ачасемпе тĕл пулса калаçрĕç.**

## Патшалăхăн пулăшăвĕ курăмлă

Ашшĕ-амăшĕн тĕп тивĕçĕ – ачасене йĕркеллĕ воспитани парса ӳстересси. Вĕренӳ çулĕ умĕн çак ыйту уйрăмах çивĕччине шута илсе семинар йĕркелеме шутланине каларĕ маларах асăннă комисси ĕçне йĕркелекен сектор ертӳçи Л. Петрова. Район администрацийĕн опекăпа попечительство секторĕн ĕçченĕсемпе, районти социаллă хӳтлĕх пайĕн специалисчĕсемпе пĕрле комисси членĕсем йывăр лару-тăруллă çемьесенче тăтăшах пулаççĕ. Çакăн пек çемьесенчен ытларахăшĕ нумай ачаллисем. Çаванпа та çемьери тупăш пĕчĕк пулни харăсах виçĕ е ытларах ачана пырса тивет. Паллах, ырă енчен мар.

Нумай ачаллă çемьен йывăрлăхĕ те сахал мар тесе паян чылайăшĕ çемьере пĕр е икĕ ача пулнине норма вырăнне хурать. Кăна тĕрлĕ ыйтăмсен хуравĕсем çирĕплетеççĕ. Çаванпа пĕрлех нумай ачаллă çемье тенине, шел пулин те, çителĕксĕр укçа-тенкĕпе, пурăнмалли условисем хăтсăр пулнипе çыхăнтараççĕ. Анчах та çакăн пек çемьесенче ачасем туслăрах ӳснине, вĕсем пĕр-пĕрне тата ашшĕ-амăшне пулăшма хатĕррипе палăрса тăнине каларĕç психологсем.

Районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Н. Петрова паянхи куна районта ачаллă çемьесем пурĕ 4497 пулнине пĕлтерчĕ. Вĕсенче пĕтĕмпе 7299 ача ӳсет. Нумай ачаллă çемьесем вара 393. Вĕсенче 1250 ача çитĕнет. Патшалăх виççĕ тата ытларах ачаллă çемьесене паракан пулăшу вара питĕ курăмлă. Чи малтанах çĕршыв шайĕнчи амăш (çемье) капиталĕ пирки тата Чăваш Республикинчи капитал – 100 пин тенкĕ – пирки (ăна пирĕн районти 50 ытла çемье илнĕ те ĕнтĕ) асăнса хăвармалла. Çакă хăех питĕ пысăк пулăшу. Кунсăр пуçне виççĕмĕш е хыççăнхи ача çуралсан çĕр лаптăкĕпе тивĕçтереççĕ. Ача çуратнă хыççăн пĕр хутчен паракан тӳлев, уйăхсерен ачасене парса тăракан пособи, çулталăк çурăччен ачана пăхнăшăн паракан пособи. Пилĕк тата ытларах ачаллă çемьесем вара пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма черете тăрса хваттерлĕ те пулайраççĕ. Пирĕн районта хальлĕхе пилĕк тата ытларах ачаллă çемьесем пурĕ те 10 çемье кăна.

Акă ЧР Пуçлăхĕ кăçал июнь уйăхĕнче алă пуснă Указ та çитес çултан пуçласа виççĕмĕш е ун хыççăнхи ачасене çуратакансем майлă тунăскерех. Виççĕмĕш е ун хыççăнхи ача çуратакансене, çемьери кашни çын пуçне тивекен вăтам тупăш пурăнмалли чи пĕчĕк виçерен сахалтарах тивет пулсан, ача виçĕ çул тултариччен республикăра çирĕплетнĕ ачасен пурăнмалли чи пĕчĕк виçи чухлĕ пособи пама пуçлĕç. Ку сумма индексациленсе пырать, халĕ вăл 5 пин ытла тенкĕ пулнине шута илсен ку тепĕр ĕç укçи майлах. Апла ачана садика йĕркеллĕ çӳретме те, ăна ӳсме лайăх условисем туса пама та майсем нумайланаççĕ. Ашшĕ-амăшĕн хăйсен ачисене пысăк тимлĕх уйăрмалла, вĕсен кăмăл-туйăмĕпе, шухăшĕпе интересленсе тăмалла кăна.

## Шкул е çемье: хăшĕ ответлă?

Пĕлӳ кунĕнчи пĕрремĕш шăнкăравпа пĕрлех хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕ те хăйсене валли «асамлă» шăнкăрав янăрарĕ тесе шутлать: «Ачана шкула килсе ятăмăр. Халĕ ăна эсир, вĕрентекенсем, воспитани парăр». Çак тĕппипех тĕрĕс мар шухăша ачана кашни кун хăвăн ырă тĕслĕхӳпе пăхса ӳстермелли пирки манакан ашшĕ-амăшĕ, шел те, ытларах йышăнать.

Муркашри вăтам шкулта директорăн воспитани енĕпе вăй хуракан çумĕ Е. Ефанова та палăртрĕ çакна. Ача шкулта 4–6 урок вĕренет, тепĕр чухне класри тата класс тулашĕнчи мероприятисене хутшăнать. Çапла вара талăкри 24 сехетрен пĕчĕк пайĕ кăна унăн шкулта иртет.

Çаванпа та воспитани пирки калаçнă чух малтанах çемьене тишкермелле. Ача килте, çемьере мĕн курать, çавна ăша хывса ӳсет. Эрех ĕçекен е пирус туртакан ашшĕ, сăмахран, хăйĕн ывăлне çапла пулмалла мар тесе нимĕнле те çĕр процент таран ĕнентереймĕ, мĕншĕн тесен вăл хăй çак сиенлĕ йăласенчен уйрăлаймасть. Апла хамăр тĕслĕх пулаймастпăр пулсан ача пĕр-пĕр йăнăш тунипех унтан пăрăнни пачах тĕрĕс мар. Йăнăша пĕрле сӳтсе явмалла, унăн сăлтавĕсем мĕнре пулнине ăнланса илсе ачана малалла пурăнма пулăшмалла. Ашшĕ-амăшĕ шкулпа тачă çыхăну тытни вара йывăр лару-тăруллă çемьесенче ӳсекен ачасене тĕрĕс çулпа утма пулăшать.

Çул çитмен ачасене тата вĕсен прависене хӳтĕлекен комисси ертӳçи, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л. Тарасова ку семинарта та комисси яланах ашшĕ-амăшне те, ачасене те пулăшма хатĕррине аса илтерчĕ. Çаванпа та комисси ларăвĕсене пымалла пулса тухсан ашшĕ-амăшĕсен хăйсене пăшăрхантаракан ытти ыйтусем пирки те манмалла мар. Шухăшсене уçса парсан пулăшу пулатех.

Семинара Шупашкартан килнĕ психологсем те ашшĕ-амăшне чылай ырă сĕнӳ-канаш пачĕç. Çав хушăрах вĕсем пăшăрханмалли цифрăсемпе, ачасемпе пулса иртекен лару-тăрусемпе паллаштарчĕç, вĕсенчен мĕнле асăрханмаллине те вĕрентрĕç. Республикăри наркологи диспансерĕн ача-пăчапа çамрăксен уйрăмĕн ертӳçи Н. Никифорова, ачасемпе çамрăксен республика библиотекин ертсе пыракан психологĕ И. Яковлева, ĕç тăвакан уголовлă инспекцин республикăри филиалĕн пай ертӳçи Н. Кулешова семинар вăхăтĕнче «Надежда» центр пулĕмĕнче ачасемпе куçа-куçăн курса калаçрĕç. Çакă та семинар ĕçĕн питĕ паха енĕ пулчĕ.

Психолог пулăшăвĕ чикĕлеш енче тахçанах тӳлевлĕ. Кунта вара – тархасшăн, усă кур кăна. «Надежда» консультаципе методика центрĕн специалисчĕсем те кашни кунах тӳлевсĕр пулăшу параççĕ.

Ашшĕ-амăшĕсене вара ачасене çĕрлехи вăхăтра урама тухма ирĕк памалла маррине аса илтерчĕç вĕсем. Мĕншĕн тесен преступленисенчен ытларахăшĕ çак вăхăтра пулать. Пирĕн районта та акă условлă майпа айăпланă çул çитмен икĕ çамрăк хăйсене палăртнă наказание пурнăçлать.

Ачасем уроксем хыççăн тĕрлĕ кружок-секцине çӳреччĕр. Çакă вĕсен дисциплинине çирĕплетнипе пĕрлех ответлăхне те ӳстерет. Ачаранах пушă вăхăта йĕркеллĕ ĕçре ирттерни пурнăç тăршшĕпех усă кӳрĕ. Муркашри «Ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК» директорĕ А. Куликов акă районти хушма пĕлӳ паракан учрежденисен услугисем те ачасем валли тӳлевсĕр пулассине пĕлтерчĕ. Унта çӳреме ан ӳркен кăна. «Инçе, майĕ çукрах тени сăлтав мар пек туйăнать. Тăрăшсан майсем тупма пулатех.

## «Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн»

Çак ятпа республикăра çулсеренех ыр кăмăллăх марафонĕ иртет. Пĕлтĕр марафон счечĕ çине районтан куçарнă укçа-тенкĕпе районти ачасенех пулăшаççĕ. Акă семинар вĕçленес умĕн кунта чĕннĕ ачасене шкула каймалли канцтаварсемпе тивĕçтерчĕç: пĕтĕмпех кирлĕ, пĕтĕмпех ачасем усă курмалли хатĕр.




Шкул умĕнхи парнесене париччен район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев ашшĕ-амăшĕсем семинара килнине ырларĕ. «Апла эсир ачăрсене йĕркеллĕ воспитани парассине хутшăнма хатĕр. Çакă пуриншĕн те чи пĕлтерĕшли. Район шайĕнче çак ыйту питĕ çивĕч тăрать, вăл питĕ анлă ыйту. Çаванпа та ăна татса парассине, лару-тăрăва лайăх енне улăштарас тесе кашнинех тăрăшмалла», – çапла палăртрĕ вăл.

Тен Ростислав Николаевич калашле «Надежда» центра та кăшт маларах уçмалла пулнă. Психолог пулăшăвĕ тени те кунсерен кирлĕ пулăм вырăнĕнчех пулмалла. Çакăнтан вăтанмалла мар. Ачасене воспитани парассинче шкул пĕччен пултараймĕ, темĕнле тăрăшсан та.

Республикăн патшалăх тĕп инженер инспекторĕ В. Димитриев та ачасене парнесем панă май çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче ăнăçу, ашшĕ-амăшĕсене чăтăмлăх тата çемьере килĕшӳлĕх сунчĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: «Çакăн пек пысăк парне вĕренӳ çулĕ умĕн питĕ вырăнлă пулчĕ».**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Саламлатпăр



Хаклăран та хаклă, юратнăран та юратнă мăшăрăма, аттене, ывăлăма, тăвана – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Валерьян Виталиевич ПРОКОПЬЕВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, юхан шыв пек вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей, савăнăç сунатпăр. Эс пурри – нимĕнпе виçейми пуянлăх. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр. Эсĕ пурри – пирĕншĕн телей.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ашшĕ, 3 ывăлĕ, тăванĕсем.**



Юратнă аннене, асаннене, кукамая – Оринин ял тăрăхĕнчи Вăрманкасси ялĕнче пурăнакан **Зинаида Семеновна ПАВЛОВĂНА** 65 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Эсĕ пурри пирĕншĕн пысăк телей тата пуянлăх. Эпир санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕ, мăнукĕсем.**



Хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, ырă кăмăллă аннене, хунямана, асаннене – Катăкуй ялĕнче пурăнакан **Раиса Гавриловна АЛЕКСАНДРОВĂНА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр. Малашне те сана пурнăçра Турри вăй-хăват парсах тăтăр. Мĕн ĕмĕтленни-шутлани пурнăçа кĕрсе пытăр ялан, хуйхă-суйхă ан пытăр çума нихăçан. Анлă кĕрекӳ тăван кил-йыша хапăл тутăр куллен. Пире, ачусене, кун-çул йывăрлăхне пăхмасăр пурнăç çулĕ çине кăларнăшăн тата халĕ те пирĕншĕн чăн-чăн тĕрек пулнишĕн тав тăватпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрĕвĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

## Ыйту – хурав

# Ĕçлеме – ытти регионсене

**Районти ĕçпе тивĕçтерекен центр çынсене районта кăна ĕç тупса пама пултарать-и? Ытти регионсене ĕçлеме кайма май çук-ши?**

**(Редакцие шăнкăравланинчен).**

***Çийĕнчех районти ĕçпе тивĕçтерекен центрпа çыхăнтăмăр. Акă мĕнле хурав пачĕç унтан:***

– Ку енĕпе ĕçпе тивĕçтерекен центр ĕçлет. Ĕçсĕррисем тесе шутланакансенчен тата ĕçлемен ытти çынсенчен те Мускав облаçне кĕрекен «Агронавт», «Вегетория», «Раменье», «Бунятино» агрофирма» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсене ăсатма ушкăнсем пухатпăр. Арçынсемпе хĕрарăмсене пахча çимĕç пуçтарса кĕртме йышăнаççĕ. Уйăхри ĕç укçи 15 пин тенкĕрен кая мар. Çынсен хăйсемпе пĕрле медицина справки тата ытти документсем пулмалла.

Кунпа пĕрлех Воронеж облаçĕнчи «ТНВ «Машков и компания «Красинское» чикĕллĕ яваплăхлă обществăна пан улми садĕнче тата фермăра ĕçлеме рабочисем кирлĕ. Ĕçленине кура тӳлеççĕ. Килĕшӳре пăхнă условисемпе килĕшӳ срокĕсене пăхăнсан апатланнăшăн, пурăннăшăн, ĕçлеме кайнăшăн çул укçи тӳлемелле пулмасть. Каяс текенсен пĕрле флюорографи тăнин кăтартăвĕ кирлĕ.

Чул хулари «Доскино» агрокомплекс» чикĕллĕ яваплăхлă общество вахта мелĕпе ĕçлеме хĕрарăмсене йыхравлать. Теплицăсенче ĕçлемелле, калчасем лартса ӳстермелле, пăхса тăмалла.

Волгоград облаçне (Т.С. Соколова, С.С. Петров, С.В. Казаченко уйрăм предпринимательсем) арçынсемпе хĕрарăмсене сезонлă ял хуçалăх ĕçĕсене (пахча çимĕç пухса кĕртме) йышăнаççĕ. Ĕç укçи уйăхне 15 пин тенкĕрен кая мар тӳлеççĕ. Тӳлевсĕрех апатлантараççĕ, вакунсенче пурăнтараççĕ, çул укçи тӳлеттермеççĕ.

Тутарстан Республикинчи «Бола» СХПК» чикĕллĕ яваплăхлă обществăна вильăх-чĕрлĕх пăхакансем кирлĕ. Ĕç укçи уйăхне 15 пин тенкĕрен кая мар.

Ĕçлеме каякан рабочисене сентябрĕн 11-мĕшĕнче тата 25-мĕшĕнче ăсататпăр. Çул укçине ĕçлеме йышăнакансем тӳлеççĕ. Ĕçлеме икĕ уйăхлăх е ытларах тапхăр валли килĕшӳ тăваççĕ.

Тулли информаци патне районти ĕçпе тивĕçтерекен центра пыма ыйтатпăр. Адресĕ: Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 6-мĕш çурт. Тел.: 62-1-66».

## Редакци почтинчен

# Лицей пурлăхĕ интереслентерет

***Редакцие Муркаш лицейĕ вырнаçнă çуртри пурлăхпа кăсăкланаканран çыру килчĕ. «Лицей вырăнне ача сачĕ уçăлать тесе район хаçачĕ урлă пĕлтернĕччĕ. Лицейне чăнах та хупнă пулмалла. Кашни кунах темĕнле самосвалсем сĕтел-пукан тие-тие каяççĕ...» – çакăн пек йĕркесем пур унта. Çыру çыракан çак пурлăха ăçта тиесе кайнипе кăсăкланать.***

***Унăн ыйтăвне район администрацийĕн вĕрентӳ тата çамрăксен пайĕн пуçлăхĕ З. ДИПЛОМАТОВА хуравлать:***

– Муркашри вăтам шкула ун çумне Муркашри лицея хушнипе реорганизаци тăвасси пирки район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕ пулнă. Çаванпа та Муркашри лицейра унти пурлăхăн черетлĕ инвентаризацине туса ирттернĕ. Хыççăн вара пурлăха районти ытти вĕрентӳ учрежденийĕсене, вăл шутра Муркашри вăтам шкула та, куçарма актсем туса тиесе тухассине пăхса хунă. Лицей пулнă çуртра паян-ыран юсав ĕçĕсем пуçланмалла. Çаванпа та пурлăха кĕске вăхăтрах тиесе тухмалла. Ку тĕлĕшпе Муркаш шкул администрацийĕ машинăсем тупса яваçтарас ĕçре пулăшу кӳчĕ.

**Н. ДИМИТРИЕВА хатĕрленĕ.**

Ыран – Нефть тата газ промышленноçĕнче ĕçлекенсен кунĕ

# Ял пурнăçне лайăхлатасси – тĕп тĕллев

***Сентябрĕн пĕрремĕш вырсарни кунĕнче йăлана кĕнĕ йĕркепе Раççейри нефть тата газ промышленноçĕнче ĕçлекенсем хăйсен професси уявне паллă тăваççĕ. Пирĕн район та çак уявран айккинче тăрса юлаймасть. Мĕншĕн тесен Муркаш енĕн ытларах пайĕ çут çанталăк газĕпе тухăçлă усă курать.***

***Пирĕн районта çут çанталăк газĕпе çыхăннă ĕçсене пурнăçлакан тĕп организаци – «Чувашсетьгаз» уçă акционерлă обществăн «Моргаушимежрайгаз» филиалĕ. Район çыннисем юлашки çулсенче çут çанталăк газĕпе усă курассине пурнăçра тĕп вырăна кăларчĕç пулсан, вĕсен ку ĕçре сиксе тухакан ыйтăвĕсене вăхăтра тата туллин тивĕçтересси – пĕлтерĕшлĕ пулăм.***



– Ĕçĕ нумай, анчах пурнăç малалла аталаннине йывăрлăх теес килмест. Ĕçĕмĕр пĕтĕмĕшле ял пурнăçне лайăхлатассипе çыхăнни пире çанă тавăрсах ĕçлеттерет. Раççей тата Чăваш Республикин ертӳçисем, Правительствисем яла аталантарассипе малашлăхшăн йышăннă программăсене пурнăça кĕртессине эпир хамăр тивĕç тесе шутлатпăр, хамăртан мĕн килнине пĕтĕмпех вăхăтра тата пахалăхлă тума тăрăшатпăр, – тет паян «Чăвашсетьгаз» уçă акционерлă обществăн «Моргаушимежрайгаз» филиалăн директорĕ Решит Халиуллович Чебенов.

Ертӳçĕ сăмахĕнчен асăннă филиалăн паян ĕçĕ нумай. Анчах пурнăç малалла аталаннине йывăрлăх темеççĕ кунта. Йывăрлăхсене çĕнмесĕр çăмăллăх та çук. Хăйсен ĕçĕ пĕтĕмĕшле ял пурнăçне лайăхлатассипе çыхăнни газовиксене çанă тавăрсах ĕçлеттерет. Раççейре тата Чăваш Республикинче яла аталантарассипе малашлăхшăн йышăннă программăсене пурнăça кĕртессине филиалта кая юлмасăр пурнăçламалли ĕç тесе шутлаççĕ.

«Моргаушимежрайгаз» филиал виçĕ район (Етĕрне тата Хĕрлĕ Чутай) территорийĕпе пĕтĕмпе 2 пин ытла километр газ пăрăхĕсем пăхса тăрать. Вăл шутран Муркаш районĕнче – 900 километра яхăн. Кунпа пĕрлех филиалăн 399 ГРП тата ШРП ĕçленине, 29 пин ытла килте çут çанталăк газĕпе усă курнине, 678 коммуналлă йăла предприятийĕсенче, 97 промышленность котельнăйĕнче тата автогаз заправка станцийĕнче газпа епле усă курнине пăхса тăмалла. Çăмăл ĕç мар çакă. Анчах кунта вăй хуракан 180 çынлă коллектив шаннă ĕçе пĕлсе йĕркелесе пынипе паянхи ĕç ырана юлмасть.

Райгаз коллективĕ пурнăçпа тан пынине çирĕплетекен пĕр факт çинче те чарăнса тăрас килет. Юлашки 3 çулта электрохимзащита бригадин монтерĕ А. Николаев тăрăшнипе филиал тытăмĕнчи газификаци тата газ пăрăхĕсен схемисене компьютер çине куçарнă. Ку вăл оперативлăха ӳстерме пулăшать.

– Ĕçне пĕрле тăватпăр та никама та уйăрса калас килмест. Кашниех хăйне шаннă ĕçре ответлă специалист. Района газификацилесе пĕтерес ĕçе тӳпе хывнисем те, паян ку ĕçе пăхса тăракансем те уяв саламне тивĕç, – вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне Р. Чебенов.

Уяв ячĕпе сире! Куллен ĕçе сывлăхпа тухса килĕрсене телейлĕ таврăнмалла пултăр!

**А. БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре:«Моргаушимежрайгаз» филиалта ĕçлекенсен пĕр ушкăнĕ черетлĕ ĕç кунĕ умĕн.**

Республикăра

# Çĕршĕн явап тытма вăхăт

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1 стр.).

Тĕрĕсленĕ чухне кашни виççĕмĕш тĕслĕхре учет политикине туса пынă чухне, пурлăх реестрĕнчи информацие çĕнетнĕ çĕрте çитменлĕхсем пурине палăртнă. Уйрăм учрежденисенче патшалăх пурлăхĕпе эффективлă усă курманнине тупнă. Финанспа хуçалăх ĕçне тĕрĕсленĕ хыççăн пĕр ертӳçĕне асăрхаттарнă, теприне выговор панă, тăватă ертӳçĕпе пĕр бухгалтера ĕçрен хăтарнă.

Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе усă курассинче Муркашпа Шупашкар районĕсенче коррупцилле право йĕркине пăсни координаци канашĕн уйрăм теми пулнă. Светлана Енилина каланă тăрăх 2007–2010 çулсенче республика территорийĕнче граждансем массăллăн ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен пысăк лаптăкĕсене харпăрлăха куçарнă. 2011 çулччен ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене çаврăнăшран кăларнине кирлĕ пек тĕрĕслесе тăман.

Акă Шупашкар районĕнче ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене массăллăн харпăрлăха илнине палăртнă. Çав тери йӳнĕ хакпа (тĕслĕхрен, 19 гектарне 1200 тенкĕпе) илнĕ çĕр лаптăкĕсене пĕчĕк лаптăксем çине пайланă. Вырăнти самоуправлени органĕсем пулăшнипе çĕр лаптăкĕпе усă курмалли тĕсе улăштарнă. Хыççăн участоксене кашни соткишĕн 55-60 пин тенкĕпе сутма тăратнă.

Светлана Енилина махинаторсем ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене туянас тата илсе сутас тĕлĕшпе усă куракан типлă схемăсене илсе кăтартнă. Вĕсенчен пĕри – çĕре муниципаллă районсенчен тата ял тăрăхĕсенчен харпăрлăха граждансене тата юридициллĕ лицосене панă чухне саккуна пăсни.

Акă Муркаш районĕнчи Катькас ял тăрăхĕнче ял хуçалăх кооперативне 118 гектар çĕре арендăна панă. Кооператив çак çĕрĕн пĕр пайне çеç пăхса тăнă пулин те, арендăна пани виçĕ çул иртсен, Муркаш район администрацийĕ арендăлакан лаптăка вĕсене сутасси çинчен килĕшӳ тунă. Çакăн хыççăн кусем ял хуçалăх çĕрне дача тумалли çĕр çине куçарма, пĕчĕк участоксем çине пайласа сутма хăтланнă. (Сăмах «Кадикасинский» кооператив пирки пырать.) Çакна ЧР Арбитраж сучĕ урлă чарса лартма май килнĕ.

Михаил Игнатьев муниципаллă влаç органĕсене ял хуçалăх çĕрĕсемпе усă курнине тивĕçлипе тĕрĕслесе тăманшăн, тепĕр чухне саккунсăр çĕр операцийĕсене хутшăннине палăртса хытăн критикленĕ. Республика пуçлăхĕ Шупашкар çывăхĕнчи ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене дача строительстви валли куçарнине сивленĕ. «Пирĕн совет саманинче граждансене панă дачăсен 40 процентне юхăнтарса янă. Унта çуртсем те тахçанах туса лартнă. Çак лаптăксемпе усă курма пуçламасăр, ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен пĕр гектарне те дачăсем тума уйăрмалла мар», – пĕтĕмлетнĕ Михаил Игнатьев.

Официально

## Образованы избирательные участки

**В соответствии со статьей 19 Федерального закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации» и статьей 9 Закона Чувашской Республики «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике», по согласованию с Моргаушской территориальной избирательной комиссией постановлениями администраций Моргаушского (от 27.08.2012, № 93), Чуманкасинского (от 27.08.2012, № 38), Юськасинского (от 27.08.2012, № 44) сельских поселений Моргаушского района образованы следующие избирательные участки для проведения голосования и подсчета голосов избирателей на досрочных выборах 14 октября 2012 года:**

**1. Главы Моргаушского сельского поселения:**
**Октябрьский избирательный участок № 1**

Место нахождения участковой избирательной комиссии и помещения для голосования: здание Дома Спорта с.Моргауши. Границы избирательного участка: ул. 50 лет Октября, ул. Парковая, ул.Г агарина, ул. Восточная с. Моргауши.

Телефон № 63-1-48.

**Чапаевский избирательный участок № 2**

Место нахождения участковой избирательной комиссии: методический кабинет районного Дома культуры с.Моргауши. Место нахождения помещения для голосования: фойе районного Дома культуры с. Моргауши. Границы избирательного участка: ул. Чапаева, ул. Учительская, ул. Комсомольская Площадь, ул. Коммунальная, ул. Заводская, ул. Речная, ул. Пионерская, ул. Набережная, ул. Советская, ул. Ленина, ул. Красная Площадь, ул. Мира, ул. Южная с. Моргауши.

Телефон № 62-6-30.

**Шептак-Моргаушский избирательный участок № 3**

Место нахождения участковой избирательной комиссии и помещения для голосования: МБОУ «Моргаушская средняя общеобразовательная школа». Границы избирательного участка: ул.Красноармейская, ул.Фронтовая, ул. Колхозная, ул. Новая Колхозная с. Моргауши, дер. Синьял-Моргауши, дер. Шептаки, дер. Сюрла-Три, дер. Малиновка.

Телефон № 62-3-66.

**II. Главы Чуманкасинского сельского поселения:**
**Чуманкасинский избирательный участок № 4**

Место нахождения участковой избирательной комиссии и помещения для голосования: МБОУ «Чуманкасинская средняя общеобразовательная школа». Границы избирательного участка: дер. Одаркино, с.Чуманкасы, дер. Шербаши, дер. Карманкасы, дер. Ягаткино.

Телефон № 61-2-66

**Изедеркинский избирательный участок № 5**

Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет заведующего Изедеркинским сельским клубом. Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал Изедеркинского сельского клуба.

Границы избирательного участка: дер. Изедеркино, дер. Соляной.

Телефон № 61-3-49.

**III. Главы Юськасинского сельского поселения:**
**Юськасинский избирательный участок № 6**

Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет директора Юськасинского сельского Дома культуры. Место нахождения помещения для голосования: танцевальный зал Юськасинского сельского Дома культуры. Границы избирательного участка: с. Юськасы, дер. Нюреть, дер. Падаккасы, дер. Ильбеши, дер. Актай.

Телефон № 60-7-51.

**Вурманкасинский избирательный участок № 7**

Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет директора Вурманкасинского сельского Дома культуры. Место нахождения помещения для голосования: фойе Вурманкасинского сельского Дома культуры. Границы избирательного участка: дер.Вурманкасы.

Телефон № 60-6-95.

**Мадикский избирательный участок № 8**

Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет директора Мадикского сельского Дома культуры. Место нахождения помещения для голосования: фойе Мадикского сельского Дома культуры. Границы избирательного участка: дер. Старые Мадики, дер. Новые Мадики, дер. Сюмерткасы, дер. Рогож.

Телефон № 60-8-39.

**Нижнепанклейский избирательный участок № 9**

Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет директора Нижнепанклейского сельского Дома культуры. Место нахождения помещения для голосования: фойе Нижнепанклейского сельского Дома культуры. Границы избирательного участка: дер. Верхние Панклеи, дер. Нижние Панклеи, дер. Хорнкасы.

Телефон № 60-9-59.

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия.**

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия**
**РЕШЕНИЕ**
**от 28 августа 2012 года №64/5**

**О сроке и порядке приема предложений по кандидатурам в состав участковых избирательных комиссий по досрочным выборам в органы местного самоуправления в Моргаушском районе Чувашской Республики**

В соответствии со статьями 22, 27 Федерального закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», статьей 15 Закона Чувашской Республики «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике» Моргаушская территориальная избирательная комиссия решила:

1. Установить срок приема предложений по кандидатурам в состав участковых избирательных комиссий по досрочным выборам в органы местного самоуправления в Моргаушском районе Чувашской Республики не позднее 11 сентября 2012 года.

2. Предложить политическим партиям, избирательным объединениям, общественным объединениям, представительным органам муниципальных образований, собраниям избирателей по месту жительства, работы, службы, учебы до установленного срока представить в Моргаушскую территориальную избирательную комиссию предложения по кандидатурам в состав участковых избирательных комиссий по досрочным выборам в органы местного самоуправления в Моргаушском районе Чувашской Республики.

3. Направить настоящее решение для опубликования в средства массовой информации.

**Председатель Моргаушской территориальной избирательной комиссии Л.Ю. Тарасова.**
**Секретарь Моргаушской территориальной избирательной комиссии В.Н. Фомина.**

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия**
**РЕШЕНИЕ**
**от 28 августа 2012 года №64/4**

**О количественном составе участковых избирательных комиссий по досрочным выборам в органы местного самоуправления в Моргаушском районе Чувашской Республики**

В соответствии со статьями 22, 27 Федерального закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», статьей 15 Закона Чувашской Республики «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике» Моргаушская территориальная избирательная комиссия р е ш и л а:

1. Утвердить количественный состав участковых избирательных комиссий по досрочным выборам в органы местного самоуправления в Моргаушском районе Чувашской Республики согласно приложению.

2. Направить настоящее решение для опубликования в средства массовой информации.

**Председатель Моргаушской территориальной избирательной комиссии Л.Ю. Тарасова.**
**Секретарь Моргаушской территориальной избирательной комиссии В.Н. Фомина.**

**Приложение**
**к решению Моргаушской территориальной избирательной комиссии от 28 августа 2012 года № 64/4**

Количественный состав участковых избирательных комиссий по выборам Президента Российской Федерации

| № Наименование и № УИК | Кол-во членов участковых избирательных комиссий |
|---|---|
| 1. Октябрьский № 1 | 7 |
| 2. Чапаевский № 2 | 7 |
| 3. Шептак-Моргаушский № 3 | 7 |
| 4. Чуманкасинский № 4 | 7 |
| 5. Изедеркинский № 5 | 5 |
| 6. Юськасинский № 6 | 6 |
| 7. Вурманкасинский № 7 | 5 |
| 8. Мадикский № 8 | 5 |
| 9. Нижнепанклейский № 9 | 5 |



# Сăвă çырма кăмăллакансен страници



## Çăкăр-тăвар хире-хирĕç

Çут тĕнчене эпир килетпĕр
Аннемĕрсем юратнипе.
Çуралтăмăр пулсан пĕлетпĕр
Ку тĕнчерен каймаллине.

Пуян-и, чухăн-и – тиркемĕ,
Пурте пĕр тан ун умĕнче.
Ĕмĕр саккишĕн чун çĕклемĕ
Ун чух виçеллĕ çын çинче.

Мĕнпе сана ял-йыш асилĕ?
Мĕн турăн эсĕ ыррине?
Тен, уссăр çăкăр кăна çинĕ
Манса тумашкăн кирлине?

Эрехпеле ыр ятлă пулмăн,
Укçашăн, мулшăн ан кастар.
Ыр кăмăлпа ыр ĕçшĕн çунтăн –
Сан ыр ятна пулмасть начар.

Çĕр-шывшăн çын ĕçлеме тивĕç,
Эс – унăн пĕчĕк пĕр чĕлли.
Çăкăр-тăвар вăл хире-хирĕç,
Чăн пурнăçра çак – чи кирли.

## Аттеçĕм

Яш каччă чух патвар эс пулнă,
Эс тупнă хăв ăраскална.
Аннемĕрпе телейлĕ утнă,
Ача-пăчаллă самана.

Çемьешĕн эс тарна юхтарнă,
Кил-çурт çĕкленĕ майĕпен,
Ĕçӳсене çĕр-шыв мухтанă,
Санпа мухтаннă Чăваш Ен.

Çул хыççăн çул таçта васкарĕç,
Юр сапнă тейĕн тăнлавсем...
Утма çула ӳссе хупларĕç,
Атте, эс лартнă йăмрасем.

Атте, аттеçĕм, санăн аллусем
Вăй-хал пиллерĕç ывăлусене.
Атте, аттеçĕм, санăн юррусем
Чечеклентерчĕç пирĕн чунсене.

## Ай-хай, асанне

Кашни кун пирĕнпеле
Кам аппаланать?
Вăл хитре чунĕпеле
Пире ăнланать.

Тутлă кукăль пĕçерен
Ир-ирех тăрса,
Ăшă сĕтне ĕçтерен
Ĕнине сусан.

Епле çепĕç аллусем,
Сан сăмахусем,
Иртнĕ пурнăç юррисем,
Сан юмахусем...

Пултăр вăрăм ĕмĕрӳ,
Хисеп сан валли.
Таптăр вĕçĕмсĕр чĕрӳ,
Мăнуксем валли.

Ай-хай, асанне,
Эс пирĕн пĕрре.
Пĕлетĕн-и хăв камне?
Иккĕмĕш анне!

**П. ВОРОБЬЕВ.**
Мăн Сĕнтĕр.

---

## Туй мыскари

Чăвашла эпĕ çырасшăн,
Анчах лайăххах пулмасть.
Пулăшăр мана тархасшăн,
Пулăшмасăр юрамасть.
Пурăннă хайхи пĕр каччă.
Пулнă тет вăл салтакра.
Икĕ çул çарта ирттернĕ,
Таврăнать вара яла.
Ялта ăна хĕрĕ кĕтнĕ,
Маруç ятлă чиперкке.
Ун патне малтан вĕçтерчĕ
Пирĕн каччă хайхискер.
Шак-шак-шак! шаккарĕ каччă
Маруç патне кантăкран.
Йытă хыттăн вĕрсе ячĕ,
Амăш тухрĕ алăкран.
– Ай, Ваçук, эсех-и? Кĕр-ха!
Пирĕн паян паллă кун.
Маруç акă каччă тухрĕ,
Кĕрсе эсĕ телей сун.
Каччă тем çухалчĕ кайрĕ,
Тепре кайрĕ тарăхса:
– Мĕнле майпа вăл пултарчĕ?
Пăхас пулать калаçса!
Каччă ĕнтĕ пӳрте кĕчĕ,
Шалта вара туй кĕрлет.
Çынсем: «Йӳçĕ!», – кăшкăраççĕ,
Чуп тăваççĕ хайхисем.
– Эпĕ таврăнтăм, Маруся,
Кĕтеймерĕн пулмалла.
Мĕншĕн чăннине çырмарăн,
Мĕнле пурăнас капла?
Тухса кайĕччĕ Василий,
Çулне пӳлчĕ Маруççа:
– Ман кукамай каччă тухрĕ,
Ан çиллен ĕнтĕ, Ваçça.
Маруçпа Ваçça пĕрлешрĕç,
Пурăнаç килĕштерсе.
Ачасем пăхса ӳстерчĕç,
Ыра ятлă ял çинче.

## Çĕнĕ кун алă парать

Ерипен хĕвел тухать,
Ăшăтмашкăн вăл пуçлать.
Ку-ка-ре-ку! тенипе
Куçне уçрĕ Марине.

Çӳç турарĕ, тумланать,
Картишне тухса утать.
– Кис-кис, – кушака чĕнет,
Лешĕ ăна мяу! тет.

Кампура апат парать,
Чăхсене тăрантарать.
– Му-у, – муклатрĕ ват ĕне
Курăк çиес килнипе.

Чĕвĕл-чĕвĕл сассипе
Илĕртеççĕ кайăксем.
Кашни ир çапла вара
Çĕнĕ кун алă парать.

**ПИНЕРПИ.**

## «Диагонали»

***Çапла ят панă çамрăк поэт, пирĕн ентеш Мирослава Тарханова хăйĕн пуçласа пичетлесе кăларнă сăвăсен пуххине. Автор Турхан ялĕнче 1983 çулта çуралса ӳснĕ. Хăйĕн хайлавĕсенче вăл çыннăн романтика тата идеал характерĕсене унпа çут çанталăк хушшинчи çыхăнусем урлă сăнлать, пурнăç пулăмĕсене философилле хак парать.***

***Хаçат вулакансене унăн «Ночь» сăввипе паллашма сĕнетпĕр.***

### Ночь

Июльский вечер с запахом жасмина
Клубится дымкой последождевой.
И круглый шар расцветки апельсина
Неспешно прячет жар свой под водой.
Чарует вечер, льет в глаза истому.
Целует берег ласковый прибой.
Мешает ветер к нежно-голубому
Индиго, красный, синий, золотой.
Я с высоты заросшего утеса
Объемлю мир, и мой восторжен взгляд:
Там, в глубине темнеющего плеса,
Стирает небо звездный свой наряд;
Купает месяц тело молодое;
Тропинкой лунной пробегает рябь;
А в далеке в чернеющем раздолье
Корабль гордо рассекает хлябь.
На берегу раскинувшийся город
Как светлячки огни свои зажег,
Над ним небесный темно-синий полог,
И млечный путь, и желтый лунный рог.
...Июльской ночью с запахом жасмина
Насытив вдоволь алчущую грудь,
Иду к реке, окрашенной кармином,
Чтоб на рожденье солнышка взглянуть.

---

## Амăшсен савăнăçĕ

Ачасем çуралаççĕ –
Амăшсен епле савнăç.
Ачасем çитĕнеççĕ,
Малаллах шăвать пурнăç.

Амăшсен ялан шухăш:
Пурнăç çулĕ ыйтуллă.
Амăшсен чунра хуйхă,
Куççенче çеç ăш кăмăл.

Мăшăрланчĕç пулсассăн
Амăш шучĕ тин иккĕ.
Хунеме, ан çиллен-ха:
Анне вăл пĕртен-пĕр çеç.

Аннене пулăшмашкăн
Ыр сăмах та пит хаклă.
Вĕсене чыслама та
Нихăçан манас марччĕ.

Амăшсемшĕн уяв вăл
Ачисем пĕрле чух çеç.
Кĕреки тулли пултăр,
Вăрăм ĕмĕр пурне те!

**КЛАВАА.**

## Çумăр

Пĕрĕхет ирех ăш çумăр
Тăван ял, уй-хир çине.
Çиçĕмĕ çиçет ав йăлтăр
Çутатса çӳл тӳпене.

Янăрать епле мăнаçлăн
Кĕмсĕрр! аслати сасси,
Вĕл вĕрет уç çилĕ кассăн,
Хумханать тулă пусси.

Çитĕнме ачсем йĕпеннĕ
Çумăрпа, кулаç хăйсем.
Çумăра чăнах пит кĕтнĕ
Шăрăхра ял çыннисем.

Кĕперне ял урлă хыврĕ
Асамат çич тĕсĕпе.
Йăл кулса хĕвелĕ утрĕ
Ял енне ун çийĕпе.

Вăй илсе тинех ешерĕç
Уй-хирсем те вăрмансем,
Тухăçлă тыр-пуллă пулĕç
Пит ĕçчен ял çыннисем.

**Игорь МАЙКОВ.**
Кашмаш ялĕ.

---

## Ик телейлĕ чĕре

Юлашки çутине
Сапалатчĕ пĕччен
Тӳпере уйăхпи шуçăмччен.
Ик телейлĕ чĕре
Тĕл пулсан пĕр-пĕрне
Уйрăлма хал çитместчĕ ирччен.

Ак паян эс манран
Аякра-аякра,
Шухăшпа çеç санпа эп ялан.
Анчах эс ăнлансам:
Пĕр-пĕрне юратсан
Юрату иксĕлмест нихăçан.

Юлашки çутине
Сапалать ав ирччен
Тӳпери шурă уйăх пĕччен.
Шухăшра пĕр-пĕрне
Тĕл пулаç ик чĕре,
Шухăшра уйрăлмаççĕ ирччен.

**ВЛАДИМИР.**

## Уйăх тухсан

Уйăх тухсан тӳпене
Тĕл пултăмăр пĕр-пĕрне,
Каласа ăш сăмахсем
Чĕвĕлтетрĕ чиперкке.
Тĕл пулсассăн унпала
Çухатрăм эп канăçа.
Унăн кăвак куçĕсем
Çунтараççĕ чĕрене.
Чиперккене эп кĕтсе
Лара-тăма пĕлместĕп,
Вăл хуларан килессе
Шăмат куна кĕтетĕп.
Çутă уйăх çутинче
Вăй выляççĕ çăлтăрсем,
Тĕл пулсассăн савнине
Юр юрлаççĕ чĕресем.
Уйăх тухнă тӳпене,
Вăй выляççĕ çăлтăрсем...
Вĕçĕмсĕр эп инçетре
Шыратăп хам савнине.

**П. ИВАНОВСКИЙ.**
Кĕртекасси ялĕ.

## Ман Ивановка

Эп кайсан инçете
Тунсăхлаççĕ кĕтсе
Сĕм вăрман, кайăксем,
Çырмапа çăл куççем...

Ват çăка çийĕнче
Ав пыл хурчĕ сĕрлет,
Вăрманти ĕшнере
Çĕр çырлийĕ пиçет.

Вăрмана кĕнĕ чух
Юман алă парать.
Туратти ват çын пек,
Çулçипе ачашлать.

Çуркунне ĕмĕтсем
Тăр-тăри юрри пек,
Çупăрлаççĕ вĕсем,
Саланаç инçете.

Катари шухăшсем
Кĕрхи кун çывхарсан,
Çĕнĕрен çуралаç
Юр çума пуçласан.

Яра кун Хĕл мучи
Юр пĕрчи сапалать,
Манăн ял шур тумпа
Юмахри пек ларать.

Эп утатăп уйпа,
Эп васкатăп яла.
Çупăрлаттăм сана,
Ылтăн пек сар уя.

Пиçсе çитнĕ тыр-пул
Ман куçа илĕртет.
Васкатать ансăр çул –
Тăван вырăн кĕтет!

Эпĕ çитрĕм яла,
Чĕре юрă юрлать,
Çерçисем сиккелеç,
Кăсăя савăнать.

Юрататăп сана,
Ман çуралнă яла!
Урамри йăмрасем
Яланах асăмра...

**Вена-Венера.**
Ивановка ялĕ.

---

## Сурăм ен

### (Юрă)

Çутатсан тавралăха пилеш
Уйăх вырăнне, хĕвел пекех,
Тытăнать ытарайми ереш
Хăйĕн тыткăнне илме тӳрех.

**Пит типтерлĕ уйсем**
**Ентешсен, ĕçченсен.**
**Пит хитре пахчисем**
**Тăван енĕн ăстисен.**

Сурăм шывĕн тĕкĕрĕ çинче
Карталаннă вĕççĕр пĕлĕтсем.
Пĕвеленĕ çак тӳпе тĕсне
Иленсе куç хывнă чарлансем.

**Тăван кил, тăван ен,**
**Çут çанталăк – илем.**
**Ĕшерет Сурăм ен –**
**Ман юратнă тĕнчем.**

Ак каллех ĕç кунĕ вĕçленсен
Çитĕ вăхăт пирĕн киленме.
Пур сăлтавĕ сумлă ял-йышсен
Савăнма çак тĕнчере пĕрле.

**Пит типтерлĕ уйсем**
**Ентешсен, ĕçченсен.**
**Пит хитре пахчисем**
**Тăван енĕн ăстисен.**
**Тăван кил, тăван ен,**
**Çут çанталăк – илем.**
**Ĕшерет Сурăм ен –**
**Ман юратнă тĕнчем.**

08.09.2000

**Олег ЗАЛОГИН.**

## Юрату

Юрату – асамлă туйăм,
Пурнăç савăк юратсан.
Юратсам мана эс, тусăм,
Санăн кăмăлу пулсан.
Тахçанах сана шыранă,
Кĕтнĕ ыррине шанса.
Телей килессе эп туйнă,
Сиснĕ Тур пулăшасса.
Паянтан эпĕ телейлĕ:
Эсĕ пур çак тĕнчере!
Чунри шухăшăм хĕвеллĕ,
Пурăн ĕмĕр çĕр çинче.
Юрату час-час асаплă,
Шар кӳрет вăл теприне.
Эс кăна пулин телейлĕ,
Пĕл сана эп савнине.
Юратсан эпир телейлĕ,
Тек упрар çак туйăма.
Çунат патăр сар хĕвелĕ
Ĕмĕрех пĕрле пулма.

**Е. НИКИТИНА.**
Лантăш ялĕ.

## Салтак пурнăçĕ

Йăмраллă ял, кăвак хапха,
Лутра тенкел те ман умра.
Хăçан курайăп-ши сана?
Ирпе тăрап, выртап каçпа.

Асран тухмастăн эс нихçан,
Минтер тухмарĕ ытамран.
Эс мар-ши ку тесе тытап,
Куç умĕнчех ялан тăран.

Куçа уçсан эс çук нихçан,
Юрать-ха хăть çыру çыран.
Ялан хăвна кăна мухтан:
«Паян кун та çук каччă ман».

Лăплан, чĕрем, апла пулсан.
Тĕрĕс тĕкел эс пурăнан.
Ман аннене хăçан куран –
Салам кала эсĕ манран.

Кĕтсе пурнап – ялан эс ман,
Савниçĕм, эс çакна ан ман:
Вăхăт иртет, тепĕртакран
Сана вĕçертмĕп ытамран.

## Муркаш урамĕсем

Ак утатăп Муркаш тăрăх,
Çурчĕсем епле капмар.
Пур çĕрте йĕрке, тасалăх,
Ĕлĕк ун пекех пулман.

Чечеклен, тăван Муркашăм,
Ĕмĕр пул эсĕ хитре.
Сан умра эп пуç таятăп,
Эсĕ тăван кил пекех.

## Тумпала

Тумпа, тумпа, тумпала,
Санпала мĕн тумалла?
Ватăлтăмăр пулмалла,
Тайăлатпăр кунпала.
Эсĕ халĕ ватăлтăн,
Эпĕ паян тайăлтăм.
Вăйă хĕрне тухсассăн
Аптрамастпăр пулмалла.
Пĕрер черккине ĕçсен
Ташлаятпăр пулмалла.
Тепĕр черкке тӳнтерсен
Хам та тӳнеп пулмалла.

**Е. ВАСИЛЬЕВ.**
Якаткасси ялĕ.

## Куçлăх

Мухтаннă Куçлăх тусĕ умĕнче:
– Эп ларнă пуçлăхăн сăмси çинче!

**В. ЛЕОНИДОВ.**

**Кăларăма В. ШАПОШНИКОВ пухса хатĕрленĕ.**

# Йĕркелĕхшĕн кашнинех ответлăха туясчĕ

Хăрушсăрлăх



***Урампа чипер утса пынă чухнех сирĕнне пĕр-пĕр ярала вăрлассĕ е тата сире хăратса, хĕнесе мĕн те пулин туртса илсе тараççĕ... Çакна хăй çинче туйнă çын, паллах, обществăлла вырăнти преступлени мĕн иккенне лайăх пĕлет. Çакăн пек лару-тăрусене асăрхаттарас тĕллевпе районти полици пайĕ мĕнле ĕçсем пурнăçлать-ха? Обществăлла вырăнсенчи хăрушсăрлăха, йĕркелĕхе тытса тăрасси – питĕ яваплă та йывăр ĕç. Полици сотрудникĕсем çине кăна шанса хамăр çинчен ответлăха сирни тĕрĕс-ши тата? Ытăвĕ чылай. Çавăнпа та урамри, обществăлла ытти вырăнсенчи йĕркелĕх пирки паян эпир районти полици уйрăмĕн пуçлăхĕн çумĕне, полици подполковникĕне В. ГРИГОРЬЕВПА калаçатпăр.***

**– Виталий Алексеевич, районти обществăлла вырăнсенчи преступноçа эсир мĕнле хаклатăр?**

